37-163

...неке хыççăн кĕнеке



Ухсай Йаккăвĕ

# Кăмака çинчи Иван

Чăвашиздат - 1937 - Шупашкар



УХСАЙ ЙАККĂВĔ

# КĂМАКА ÇИНЧИ ИВАН

ЙУМАХ

ФИЛИППĂВ ӳкерчĕкĕсем

ЧĂВАШСЕН
ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1937

КЕҪĔН ҪУЛХИ АЧАСЕМ ВАЉЉИ

ЯКОВ УХСАЙ—ИВАН ЗАПЕЧНЫЙ.

Редактор КУЗЬМА ЧУЛКАСЬ
Тех. редактор В. ПОРФИРЬЕВ

Послано в производ. 21/III-37 г.
Подписано к печати 22/IV-37 г.
Уполном. Чувашлита № 1546
Чувашгиз № 81. Заказ № 685
Формат б. 62×94 1/16.
Обем 1 п. л. Тираж 5000.

Тип. № 1 Чувашгиза.
г. Чебоксары, Дом печати.



Йумах йупа тăрринче,
Епĕ урхамах çинче
Сиккипе çӳренĕ чух,
Ĕлĕк-авал ĕмĕр чух,
Çав-çав çĕрте, пĕр йалта
Пĕлеттĕмччĕ ик ватта:
Пĕр старикпе карчăкчĕ,
Йалан вĕсем чухăнччĕ,
Чалăш пӳрчĕ çĕрнĕччĕ,
Тунката пек пĕчĕкчĕ,
Витнĕ улăм витĕрех
Ӳсетчĕ сар вĕлтĕрен;
Ача-пăча çукчĕ те
Тарăхатчĕç иккĕш те,
Ватă ĕмĕр пит йăвăр, —
Кирлех пулнă пĕр ывăл.
Уйăх иртет, çул иртет,
Пуçа шурă çӳç витет, —
Канса выртасчĕ ачаш,
Кирлех, кирлех ача-пча.
Карчăк шухăша кайат,

Етем кĕлетки тăвать
Йӳççе çитнĕ чустаран,
Куçне лартать кăмрăкран,
Хĕрӳ кăмака ăшне
Пăрахать хай чустине:
Ват ĕмĕре пулинччĕ,
Сарă ача тухинччĕ.
Ир те иртет, каç иртет,
Виççĕмĕш ир час çитет,
Чуста етем хăпарать,
Тăма тăрать, аптăрать,
Вăйлă йунĕ ĕрĕхет;
Тапса йарса питлĕхе,
Сиксе анчĕ урайне,
Ăшă кăмака çине
Тăпăр-тапăр хăпарчĕ,
Иван — пултăр ун йачĕ!
Виçĕ çултан сар Иван,
Каччă пулса пит аван,
Тухса кĕрсе çӳремен,
Шур кулачă çийеймен;
Ларнă кăмака çинче,
Йаланах кĕл ăшĕнчен
Типĕ пăрçа суйланă,
Вăхăчĕпе йурланă.
Пĕрре, хĕлле, ирхине
Тăвăл килнĕ тĕнчене,
Витсе кайнă пӳртсене;
Çил амăшĕ мăрйере
Ачисемпе йĕр йĕрет.
Пĕр кун иртет, каç иртет,
Тăман çаплах ӳхĕрет,
Пĕтĕм йал-йыш хуйхăрать,
Шыв çуккипе аптăрать;
Иван кăмака çинче
Шухăшламан ним çинчен,
Типĕ пăрçа суйланă,
Вăхăчĕпе йурланă.
Амăшĕ шывсăр типет,
Чĕрре кĕрет, тĕркĕшет,



Ӳкӗтлерӗ Ивана
Шыва кайма ҫырмана.
— Пӑрҫа ҫисе ларнӑ чух,
Алла йӑтма вӑйӑм ҫук,
Пӗрре вӗрсессӗн тӑман,
Вӗҫсе кайӑп, — тет Иван.
Амӑшӗ хайла пӗлет,
Ырӑ шухӑша килет:
Пӗҫерчӗ те икерчӗ,
Ҫуларӗ те ҫитерчӗ.
Сикрӗ анчӗ те Иван,
Пӗвӗ-сийӗ йывӑртан,
Силлентерчӗ урайне,
Ҫӗтӗк-ҫатӑк кӗрӗкне
Хуллен кӑна тӑхӑнчӗ,
Шӑнкӑрчи пек шӑхӑрчӗ,
Хулӗ урлӑ кӗвенте,
Икӗ витре илчӗ те
Пӑхӑнмарӗ тӑмана,
Шыва кайрӗ ҫырмана,
Пӑра тапрӗ шыв куҫӗ
Персе тухрӗ йӑлт уҫӑ.
Шыва ӑснӑ витринче

Чапак пулă пĕр пĕччен
Йарăнса кăна ишет;
Пирĕн Иван хĕпĕртет,
Çутă çунатлă пулла,
Йарса илет те алла,
Йăл-йăл пăхса хăй кулаť,
Çапла сăмахсем калаť:
— Лекрĕн иккен, сар пулă,
Çатма çинче çук пулăн.
Чапак пулă йăлăнаť,
Етем пекех калаçаť:
— Пĕрер санăн ĕмĕрте
Кирлĕ пулăп епĕ те,
Йар-ха ирĕке мана;
Чăмам епĕ çырмана,
Ил-ха виçĕ хуппăма,
Кирлĕ пулсан пулăшма,
Хуппăма ес ĕнтетĕн,
Мана йатпа чĕнетĕн.
Иван чапака итлет,
Виçĕ хуппине илет,
Йараť пулла çырмине,
Выљантарса витрине,
Каллех килне таврăнчĕ,
Шăнкăрчи пек шăхăрчĕ;
Ăшă кăмака çинче
Вĕри кĕлĕ ăшĕнчен
Типĕ пăрça суйларĕ,
Савăннипе йурларĕ.
Пĕр кун иртет, каç иртет,
Вăйлă тăман ÿхĕрет,
Пăсса тăраť тĕнчене,
Йала тăваť йур айне;
Выљăх-чĕрлĕх картара
Выçăхнипе ахăраť;
Тем сиснĕ пек авăтман
Хĕрлĕ çĕлĕклĕ автан;
Вут-кăвайтă пĕтнĕрен
Пўртсем тăчĕç сивĕре;
Хăшĕ-пĕрисем йалта

Пӳрте хӑварман кашта,—
Мĕн-мĕн ҫунаҫ, пурте вут,
Вакла-вакла пӳртне хут!
Пĕр Иван ҫеҫ пĕр пĕччен
Ларнӑ кӑмака ҫинче,
Сивĕннĕ кĕл ӑшĕнчен
Типĕ пӑрҫа суйланӑ,
Вӑхӑчĕпе йурланӑ.
Амӑшĕ тек ҫиленет,
Чĕрре кĕрет, тĕркĕшет,
Тархасларĕ Ивана
Вутта кайма вӑрмана.
— Пӑрҫа ҫисе ларнӑ чух
Алла йӑтма вӑйӑм ҫук,
Пĕрре вĕрсессĕн тӑман,
Вĕҫсе кайӑп,—тет Иван.
Ӑна хирĕҫ мĕн калӑн,—
Йалан уйав кахалӑн.
Амӑшĕ хайла пĕлет,
Ырӑ шухӑша кĕрет,
Виҫĕ ҫулхи такана,
Пусса йачĕ хурана;
Чӑрӑш хӑма сар урай
Вутӑ пулса ҫуннӑ май,
Хуранра пиҫет какай.
Акӑ ҫурӑ такана
Пачĕ пирĕн Ивана:
Иван ҫисе тӑрансан,
Виҫĕ тавлӑк ҫывӑрсан,
Пĕр ирхине вӑранчĕ,
Виҫĕ хуппа ҫунтарчĕ.
Пĕр кун иртет, каҫ иртет,
Вӑйлӑ тӑман ӳхĕрет,
Анчах пулӑ шарламасҭ,
Вутта кайма пулӑшмасҭ.
Пирĕн Иван аптӑраҭ,
Кӑмака ҫинчен анаҭ,
Кайаҭ ҫырма хĕррике,
Виҫĕ хуппӑн тип кĕлне
Шыва кӑна йанӑччĕ,

Чапак пулă курăнчĕ,
— Мĕн кирлине калаччĕ,—
Тесе чĕлхе кăларчĕ,
Килне кайса лăплан, тет,
Кирли пурте пулĕ, тет.
Иван килне таврăнаť,
Кăмака çинче лараť,
Ашшĕ-амăшне чĕнет,
Вăтăр çуна кирлĕ, тет.
Ашшĕпеле амăшĕ
Тухса кайаççĕ кўрше,
Вăтăр çуна пухаççĕ,
Вутта кайма хушаççĕ,
Иван выртаť, хуйхăрмасť,
Çапла такмаксем калаť:
— Чапак пулă ыррипе
Пулам епĕ хăна пек,
Улпут Сахрун кĕрĕкĕ,
Пуйан Ваçлей çĕлĕкĕ
Килччĕр халĕ ман çийе,
Тутлă апатсем çийем—
Урăх уйесри Михал
Патăр мана кăвакал,
Малти çуна çинехчĕ,
Хуллен пырса выртасчĕ.
Чылай инçе хулара
Улпут Сахрун пасарта
Хура пустав сутаťчĕ,
Алă çупса тăраťчĕ;
Асар-писер çил килчĕ,
Сахрунран хывса илчĕ
Сăсар тирлĕ кĕрĕкне,
Çуртсем урлă мал йенне
Йлсе кайса вĕçтерет,
Пĕтĕм халăх тĕлĕнет,
Пысăк хула пасарĕ
Кула-кула шавларĕ.
Çитмĕл çухрăм пĕр йалта,
Тăман пулман вырăнта,
Ваçилей çĕрме пуйан



Ирех тӑнӑччӗ пайан,
Мӑшӑр лаша кӳлнӗччӗ,
Хӑналӑха тухнӑччӗ,
Ҫанталӑк та лайӑхчӗ;
Кӗтмен тӑвӑл ахӑрчӗ,
Йура йӑтса тустарчӗ,
Ҫӗлӗк илсе кустарчӗ.
Ӳрӑх уйес йалӗнче,
Михал куштан килӗнче,
Йышлӑ хӑна пухӑннӑ,
Сарӑ сӑра чашкӑрнӑ;
Кӑвакалӗ хуранта
Пиҫсе сикнӗ самӑнта
Тӑвӑл тухрӗ, ахӑрчӗ,
Алӑк хӑйех уҫӑлчӗ,
Хӑпарту сӗтел ҫинчен
Тарат хӑна умӗнчен,
Тӗпсакайӗнчен тухса
Сӑра пички вӑркӑнса
Урам тӑрӑх кустарат,
Куҫ умӗнчен ҫухалат,
Хуранти кӑвакала
Ҫил вӗҫтерет тулала,

Шалт хупăнчĕ ак алăк,
Тĕлĕнет пÿртри халăх.
Кăмака çинчи Иван,
Тĕлĕкри пекех, аван,
Çулă кăвакал çийет,
Кăпăклă сăра ĕçет;
Улпут Сахрун кĕрĕкĕ,
Пуйан Васлей çĕлĕкĕ,
Хăйĕнни пекех чечен,
Пулнă унăн çийĕнче,
Алăк йарах уçăлчĕ,
Çил кĕчĕ те ахăрчĕ,
Ивана час йăтайчĕ,
Çуна çине выртарчĕ.
Иван выртать, савăнать,
Çапла такмаксем калать:
— Чапак пулă ыррипе,
Малти çуна йĕррипе
Пыччĕр ытти çунасем;
Тарăн вара çитейсен
Вăйлă тăвăл лăпланĕ,
Унта улпут вăрманĕ.
Тăрна карти пек çуна,
Кайрĕ хыçа-хыççăнах,
Çулсăр-йĕрсĕр вĕçтерсе,
Шăхăрни пек шилесе,
Акăш-макăш пынă чух,
Кайăк вĕçсе çитес çук,
Ашă тарăн варĕнче
Умлăн-хыçлăн чарăнчĕç,
Лăпкăланчĕ тăманĕ,
Унта улпут вăрманĕ.
Иван хăйаккăн выртать;
Çапла такмаксем калать:
— Чапак пулă ыррипе
Килтĕм йал-йыш çунипе,
Халĕ ĕнтĕ сĕм вăрман
Селĕм вырăн пултăр ман.
Пăчкă-пуртă вăркăнтăр,
Йывăç харăс касăлтăр,



Тийентĕр хăвăрт кăна
Çирĕм тăхăр çунана;
Вăрман сиксе кĕрлетĕр,
Ман сăмаха итлетĕр.
Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман
Каш-кашларĕ çав самант,
Таçтан сикрĕç пуртăсем,
Таçтан килчĕç пăчкăсем,
Хăйсем тĕллĕн калаçса,
Касрĕç йышлă йывăça.
Ӳкнĕ йывăç сиккелет,
Çуна çине тийенет,
Çил килчĕ те ахăрчĕ,
Вĕрен йăтса шăхăрчĕ,
Силлентерчĕ вăрмана,
Çирĕм тăхăр çунана
Пуслăх çыхса хăварчĕ,
Йур тустарса çухалчĕ.
Иван хăйаккăн выртать,
Тата такмаксем калать:
— Чапак пулă ыррипе
Килтĕм йал йыш çунипе,
Мана итлерĕ вăрман,
Хăйех касăлчĕ пайан,

Халĕ ĕнтĕ ват йуман—
Чи йуратнă йывăç ман—
Чукмар пулса чутлантăр,
Çуна çине йăвантăр.
Пысăк пуртă та килет,
Вăрман тăрăх сиккелет,
Ватă кервен йумана
Касса ларнăччĕ кăна,
Вăрман шавĕн вĕçĕ çук,
Пуртă сасси тук та тук.
Йăванчĕ те ват йуман,
Ахлатса илчĕ вăрман.
Йуман хăйех йакалаť
Турпасĕсем вăркăнаť,
Пулса тăчĕ пĕр чукмар,
Пĕчĕк те мар, начар мар,—
Çапсан, хуçĕ ĕнсÿне,—
Чи малти çуна çине
Пырса выртрĕ, шăп пулчĕ,—
Тÿстĕр вăрман улпучĕ!
Вăрман улпучĕ пуйан,
Ăна патша пуç тайаť,
Çÿл хÿмелĕ унăн çурт,—
Кайăк вĕçсе кĕрес çук.
Вăрман шавне илтсенех,
Пăхаť те вăрман çине,
Пирĕн Ивана кураť,
Тарçисене хăвалаť.
— Сăтăрăр,—тет—вăрмана,
Тыллăр-ха,—тет—Ивана!
Хĕрĕх йыттине ĕслет,
Сăнчăрсенчен вĕçерет.
Сиксе тăчĕç тарçисем,
Йăлт-йăлт турĕç хĕçĕсем,
Ушкăнпа хайар йытă
Хам-хам!—вĕрчĕ пит хытă.
Иван выртаť, хăнк тумасť.
Çапла такмаксем калаť:
— Чапак пулă ыррипе
Килтĕм йал-йыш çунипе,



Шăмма ватма, ырра мар,
Килет улпут йанă çар,
Сиксе тăр, йуман чукмар!
Йыттине те тарçине
Çапса лапчăт çĕр çумне!
Вĕçсе çитми хур-кайăк
Çунасем хăвăрт кайăр.
Йумах йуман тăрринче,
Епĕ урхамах çинче
Сиккипе çӳренĕ чух
Чăн сăмахăн суйи çук —
Сиксе тăчĕ те чукмар,
Çапкалаť иккен патвар;
Килсе ӳкет — йыт вилет,
Тепре тивет — хĕç ӳкет,
Сиссе илчĕ те тарçă,
Сехри хăпса час тарчĕ.
Йунланнă йуман чукмар,
Иванĕпе йунашар
Пырса выртаť, лăпланаť,
Ушкăн çуна хускалаť,
Çавра çил пек шăхăрса
Йала кайаť таврăнса,
Пур пек йывăç авăнаť
Ивана хапăл тăваť,
Чапак пулă Иванĕ, —

Тесе шавлаҫ вăрманĕ.
Иван килне чарăнаҫ,
Каллех такмаксем калаҫ:
— Чапак пулă ыррипе
Килтĕм йал-йыш çунипе,
Кӳтĕм ĕнтĕ нумай вут,
Пӳрте ĕмĕр-ĕмĕр хут.
Вут пушантăр килкартне,
Хамăн кăмака çине
Кайасчĕ те выртасчĕ,
Ырă тĕлĕк курасчĕ.
Сил килчĕ те Ивана
Йатса илчĕ аванах,
Уçса йачĕ алăкне,
Хучĕ кăмака çине,
Вут та ĕнтĕ пушанчĕ,
Çил ахăрса çухалчĕ.
Пĕр кун иртет, каç иртет,
Патша кăна чĕнтерет,
Улпут сута панă, тет,
Пуçне касма ыйтнă, тет.
Иван хăйаккăн выртаҫ;
Çапла такмаксем калаҫ:
— Чапак пулă ыррипе
Кăмакамçăм-мĕнĕпе
Хускалса еппин кайам,
Патша сутĕнче пулам,
Крыльца çине ларасчĕ
Карлăксене ватасчĕ.
Амăшĕ тĕпелте çӳрет
Икерчĕсем пĕçерет,
Мачча хăйех сӳтĕлет,
Кăмака тек çĕкленет,
Урама тухса лараҫ,
Мăрйинчен тĕтĕм тухаҫ,
Çăра тусан кăларса,
Пăравус пек курăнса
Хайхи кăмака пыраҫ,
Кайсан-кайсан, пăрăнаҫ,
Патша çурчĕ ылттăнран, —

Пырса çитнĕччĕ Иван,
Крыльца çине ларайчĕ,
Карлăксене ватайчĕ.
Патша кăна курнăччĕ,
Тĕпсакайне вăркăнчĕ,
Сехри хăпăнчĕ иккен,
Куçĕ кăтартаĭ икке,
Тарçисене чĕнтерет:
Ивана йăпатăр, тет,
Пулас çук, тет, ун сучĕ,
Вил, тет вăрман улпучĕ.
Сарă Иван пĕр пĕччен
Лараĭ кăмака çинче,
Шăхăрса илет кăна,—
Йан-йан йараĭ таврана,
Патшан хӳхĕм сатĕнче
Йывăç туратти çинчен
Персе анчĕç шăпчăксем,
Пĕтрĕç вĕсен йуррисем;
Кăвакалсем хăпарчĕç,
Кĕмĕл кӳлĕ пушанчĕ.
Вăл лараĭ пăрçа çисе.
Килчĕç патша тарçисем,
Аркă-аркă укçана
Параççĕ те Ивана,
Килне таврăн, тейеççĕ,
Умне çĕре ӳкеççĕ.
Иван сикет те анаĭ,
Çапла такмаксем калаĭ:
— Чапак пулă ыррипе
Укçа килчĕ аркипе;
Ылханатăп еп кунта
Вăрман хуçи улпута,
Çамки çине виç çăпан
Тухса лартăр пайантан;
Патша çурчĕ ылттăнтан
Пăхса ларчĕ айакран,
Халĕ ĕнтĕ ман йала
Куçма тивĕç пулмала;
Патша хĕрĕ, сарă хĕр

Качча кайма килĕштĕр,
Кăмака, кай килĕме
Икерчĕне пĕçерме!
Патша çурчĕ, калап еп,
Хускал еппин карап пек!
Патша крыльцине Иван
Пырса ларнăччĕ аван,
Кăмака кайаť шуса
Хура тĕтĕм кăларса,
Ылттăн çурт та хускалаť,
Сачĕ-мĕнĕпе кайаť.
Чŷречинчен пăхаť хĕр,
Патша хĕрĕ, чипер хĕр.
Тĕпсакайĕнче патша
Лараť хăйпе харкашса,
Йĕри-тавра ним те çук,
Çурт вырăнне йулнă чул.
Улпут вырташ, хуйхăраť,
Хура çŷçĕ шуралаť,
Кĕтмен çĕртен, ăнсăртран,
Çамки çинче виç çăпан, —
Тĕрлĕ пысăк хулара
Шыра-шыра тухтăра,
Канми-тăми çŷренĕ,
Пĕтмерĕ, тет çăпанĕ.
Патша çурчĕ ылттăнтан
Хĕвел пекех айакран
Ларать Иван йалĕнче,
Ваçка вилли сăртĕнче,
Çырма урлă кĕперĕ,
Çутă кĕмĕл кĕперĕ...
Унта епĕ çŷрерĕм,
Пултăм Иван туйĕнче —
Ун чух хамăр çĕрсенче
Хĕрлĕ йурсем çăваťчĕç,
Хыр çулçисем ŷкетчĕç.

Хакĕ 50 пус.

## ЧĂВАШÇЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
### КĔÇĔН ÇУЛХИПЕ ВĂТАМ ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЉЉИ
## „КĔНЕКЕ ХЫÇÇĂН КĔНЕКЕ"
### ЙАТЛĂ БИБЛИОТЕКĂ КĂЛАРАҬ.

*КĂÇАЛ ÇАК КĔНЕКЕСЕМ ТУХАÇÇĔ:*

ВЫРĂСЛАРАН КУÇАРНИСЕМ:

1. М. СИБИРЙАК—Кăвак мăй.
2. И. С. ТУРГЕНĔВ—Пу-тене.
3. А. П. ЧЕХĂВ—Хушка çамка.
4. В. ГАРШИН—Çиґнал.
5. Г. СЕНКЕВИЧ—Йанко музыкант.
6. В. КОРОЛЕНКĂ—Су-тăн илнĕ ача.
7. ДЖЕК ЛОНДОН—Киш çинчен çӳрекен йумах.
8. РОМЕН РОЛЛАН—Жан Кристоф.
9. УЙДА—Çеçен хир.
10. ГРИММСЕМ—Бремĕн музыканчĕсем.
11. ГРИММСЕМ—Хĕрлĕ çĕлĕк.
12. ГАЙДАР—Тăваттăмĕш блиндаж.
13. Д. ГРИГОРОВИЧ—Ре-зинă ача.
14. СЕТОН-ТОМПСОН—Çурăк хăлха.
15. Л. ТОЛСТОЙ—Фили-пок.
16. Л. КАÇÇИЛ—Туркă бутсисем.
17. Б. КОРНИЛĂВ—Упа.
18. А. С. ПУШКИН—Пу-лăпа пулăçă йумахĕ.

ЧĂВАШ ПИСАТĔЛĔСЕН:

1. КУÇМА ЧУЛКАÇ—Лап-шу Çтаппанĕ.
2. УХÇАЙ ЙАККĂВĔ—Кăмака çинчи Иван.
3. ИВАН МУЧИ—Кулăшла калавсем.